26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пх.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1944
ЯНВАРЬ
18
ЫТЛАРИКУН
13(6508) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

1943 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕпе 1944 çулхи январĕн 13-мĕшĕ хушшинчи вăхăтра тăшман тÿснĕ çухатусем тата Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем тытса илнĕ трофейăсем

1943 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи январĕн 13-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен фашистла çарĕсене çакăн пек çухатусем кÿнĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: танксем — 2.204, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 1.174, минометсем — 625, пулеметсем — 3.173, бронемашинăсемпе бронетранспортерсем —348, автомашинăсем — 4.686, бронепоездсем — 2, боеприпас, хĕçпăшал тата апат-çимĕç склачĕсем — 27, чугун çул эшелонĕсем — 17, паровозсем — 28, вагонсем — 400, бензин цистернисем — 40, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем — 3.063.

Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 100.000 салтакпа офицера яхăн пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех фронт çарĕсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем — 316, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 902, минометсем — 321, пулеметсем — 2.000 ытла, винтовкăсемпе автоматсем — 11.500, бронемашинăсемпе бронетранспортерсем —157, автомашинăсем — 3.514, тягачсемпе тракторсем — 47, мотоциклсем — 480, паровозсем — 20, вагонсем — 1000 ытла, çар хатĕрĕсем турттарса пыракан эшелонсем — 3, цистернăсем — 40, боеприпас, хĕçпăшал, апат-çимĕç тата ытти çар пурлăх склачĕсем — 230, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем — 3.100, лашасем—3.662, радиостанцисем — 40.

Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 7.000 çынна ытла тыткăна илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем КАЛИНКОВИЧИ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвелан ăçнерехре тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, нимĕçсене темиçе ялтан çапса кăларнă.

ВИННИЦА хулинчен хĕвелтух ăçнерехре тата УМАНЬ хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен контратакисене сире-сире янă, тăшмана çынсемпе техника енчен пысăк çухатусем кÿнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай вырăнсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 111 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 42 самолетне персе ÿкернĕ.

ЯНВАРĔН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

НОВОСОКОЛЬНИКИРЕН çурçĕртерехре пирĕн çарсем, виçĕ кун хушши малалла тапăнса пынă хыççăн, нимĕçсен оборонине фронт тăрăх 15 километр тăршшĕ татса, 8 километр таран шалалла кĕрсе кайнă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра ЩЕНАЙЛОВО, ПОЛУТИНА, ЧЕРНОЕ, СОПКИ, ВОЛГИНО, МАНОКОВО, МИХАЛКИНО, ЧИРКИ, РОВНИ, ЗАБОЛОТЬЕ ятлă пысăк ялсене тата НАСВА ятлă чугун çул станцине. Çапла вара, пирĕн çарсем НОВОСОКОЛЬНИКИПЕ ДНО хушшинчи чугун çула татнă.

Январĕн 16-мĕшĕнче КАЛИНКОВИЧИ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, темиçе ял тытса илнĕ, вăл шутра НОВОСЕЛКИ, ЯКИМОВИЧИ, КЛИНСК ятлă пысăк ялсем.

САРНЫ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă, Ровно облаçĕнчи район центрне — КОСТОПОЛЬ хулипе пысăк чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата ВЛАДИМИРЕЦ, АНТОНОВКА, ЗЛОТОЛИН, ПЕЧАЛУВКА ятлă пысăк ялсене йышăнса илнĕ.

ВИННИЦА хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата УМАНЬ хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен контратакисене сире-сире янă, çав çапăçусенче нимĕçсен 136 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 190 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 60 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Новосокольникирен çурçĕртерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, нимĕçсен оборонине татса кĕрсе, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ. Тăшман, хăйĕн оборонин сооруженийĕсемпе усă курса, хаяррăн хирĕç тăнă. Пĕр соединени чаçĕсем, çĕрле атака туса, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ пунктне — Маноково ятлă яла тытса илнĕ. Çав чаçсем çĕнтерĕве вăйлатса ярса, Насва ятлă чугун çул станцине хÿтĕлесе тăракан гитлеровецсене пырса çапнă. Хаяррăн пулса иртнĕ тытăçура совет боецĕсем тăшман гарнизонне аркатса тăкнă та çав чугун çул станцине тытса илнĕ. Çапла вара, пирĕн чаçсем Новосокольникипе Дно хушшинчи чугун çула татнă. Ку чугун çулпа усă курса, нимĕçсем хăйсен çарĕсене фронт линийĕ тăрăх ăçта кирлĕ пулнă çавăнта куçарса тăнă. Кунти çапăçусенче пирĕн çарсем тăшмана йывăр çухатусем кÿреççĕ. Пĕр кун хушшинче кăна нимĕçсен пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă.

Совет авиацийĕ тăшманăн çапăçури çарĕсене тата унăн çулйĕрĕсене пыра-пыра çапнă. Идрица ятлă чугун çул станцине тапăнса, пирĕн летчиксем нимĕçсен çар эшелонĕсене нумайĕшне сунтарса е сирпĕнтерсе янă.

* * *

Калинковичи хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Нимĕçсем халĕ те шăнса ларман Ипа шывĕ çинче çирĕпленсе ларнă. Хаяр çапăçусем хыççăн совет чаçĕсем шыв урлă, каçнă та унăн хĕвеланăç енче ларакан темиçе яла тытса илнĕ. Новоселки ятлă пысăк ялшăн пынă çапăçура гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Сарны хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Ровно облаçĕнчи район центрне—Костополь хулипе пысăк чугун çул станцине тытса илнĕ. Тăшман, контратакăсем туса, çав хулапа чугун çул станцине каялла тытса илме хăтланнă, анчах та ăна пысăк çухатусем кÿрсе каялла хăваласа янă. Нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ тата темиçе артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă. Боеприпассемпе апат-çимĕç склачĕсене тытса илнĕ. Пĕр участокра нимĕçсем унти ялсене çирĕплетнĕ те çав тĕлте совет чаçĕсене чарса тăратма шутланă. Ровно облаçĕнче кĕрешекен партизансем çав тĕреклĕ пунктсене сасартăк тапăннă та гитлеровецсен гарнизонĕсене аркатса тăкнă.

* * *

Винница хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата Умань хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсен контратакисене сире-сире янă. Пĕр ансăр участокра тăшман ирхине ирех хăйĕн 100 танкне ытла тата темиçе полк пехотине çапăçăва кĕртсе янă. Совет артиллерисчĕсем, вăйлăн персе, гитлеровецсене чарса лартнă. Çĕнĕ вăйсем куçарса пырсан, тăшман çĕнĕрен контратакăсем тума пуçланă. Хаяр çапăçура совет чаçĕсем нимĕçсене пысăк çухатусем кÿнĕ, вара тăшманăн каялла чакма лекнĕ. Гитлеровецсене 2.000 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 63 танкне, хăй тĕллĕн çÿрекен 9 тупине тата 14 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр районра нимĕçсем, пирĕн оборонăна татма хăтланса, ултă хутчен атакăна кĕре-кĕре кайнă. Тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă, нимĕçсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Пирĕн позицисем умĕнче нимĕçсен персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă 40 танкĕ ытла, 10 бронетранспортерĕ тата хăй тĕллĕн çÿрекен 23 тупи тăрса юлнă. Кун каçиччен пирĕн артиллеристсем, танкистсем тата пехотинецсем мĕн пурĕ нимĕçсен 136 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнче кĕрешекен партизансем чугун çул çине минăсем лартса тухнă. Нимĕçсен танксемпе автомашинăсем турттарса пыракан эшелонĕ партизансем лартнă минăсем çине кĕрсе кайса сирпĕнсе кайнă. Çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ платформăсемпе танксем иккĕмĕш çула та пÿлсе лартнă. Часах Украинăра çаратса пухнă тĕштырра хĕвеланăçнелле турттарса пыракан хирĕçле поезд хытă пынă çĕртенех çав ванчăк платформăсемпе танксем çине кĕрсе кайнă та ÿпĕнсе кайнă. Çав участокра вара 5 кун хушши поездсем çÿреймен.

* * *

Нимĕçсен 129-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 427-мĕш полкăн 1-мĕш батальонĕнчен тыткăна лекнĕ врач Герхард Конради çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн дивизие Городок патĕнчи позицисене кирек мĕнле пулсан та хăй аллинче тытса тăма приказ панăччĕ, анчах та дивизи ку задача пурнăçа кĕртме пултараймарĕ. Вырăс артиллерийĕн вут-çулăмĕ пире калама çук хăрушă çухатусем кÿчĕ. Командирсен пункчĕсене, çавăн пекех тата пирĕн артиллерин наблюдательнăй пункчĕсене пĕтерсе тăкрĕç. Эпĕ фронтра ĕнтĕ нумайранпа ĕçлетĕп, анчах та артиллерин çав тери хăватлă вут-çулăмне ку таранччен курман. Вырăссенчен таталса тарасси те ăнăçлăн пулмарĕ. Нимĕн йĕрки-палăрăсĕр каялла чакакан 428-мĕш тата 430-мĕш полксене, çавăн пекех 427-мĕш полкăн 3-мĕш батальонне вырăссем çавăрса илчĕç. Çавăрса илнĕ ункăран уйрăм пĕчĕк ушкăнсем тата пĕчче-пĕччен çынсем кăна тухса тарма ĕлкĕрчĕç». Юлашкинчен Герхард Конради çапла каланă: «Юлашки кунсенче офицерсем фронтри лару-тăру çинчен пĕр-пĕринпе калаçми пулчĕç. Нумайĕшĕ Германи çĕнтересс ине шанми пулчĕç, çавăнпа вĕсем вăрçă мĕнле пĕтесси çинчен сахалтарах шухăшлама тата сахалтарах калаçма тăрăшаççĕ».

* * *

Житомир облаçĕнчи Паволочь ялĕнчи çынсем, ял пуххине пухăнса, нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тунă тискер ĕçсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «1943 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче ирхине 4 сехетре нимĕçсем Паволочь ялне хупăрласа илчĕç те пĕтĕм халăха чиркÿ патне хăваласа пуçтарчĕç. Çав кун фашистсен ирсĕрĕсем 136 совет гражданне асаплантарса вĕлерчĕç тата персе пăрахрĕç. Старике сене, хĕрарăмсене тата çамрăк ачасене çапла пĕтерсе тăкнă хыççăн нимĕçсем хăйсемпе пĕрле пирĕн ялти 400 çынна ытла хăваласа кайрĕç. Вĕсен пурнăçĕ çинчен ку таранччен нимĕн те паллă мар». Ял пухăвĕ хушнă тăрăх, акт çине Паволочь ялĕнчи çак çынсем алă пуснă: Иончик, Курсон, Чернуха, Карпица Огородник.

Польша правительстви калани

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 15-мĕшĕнче ирхине Польша правительстви çакăн пек заявлени пичетлесе кăларнă: «Польша правительстви Совет правительствин заявленийĕпе, ТАСС 1944 çулхи январĕн 11-мĕшĕнче пĕлтернĕскерпе, паллашрĕ. Çав заявление ăна Польша правительствин январĕн 5-мĕшĕнчи декларацине ответлес йĕркепе пичетлесе кăларнă. Польша правительстви ертсе пынипе, поляк халăхĕ, калама çук пысăк çухатусем тÿссе, нимĕçсене хирĕç пĕр чарăнмасăр кĕрешни—Совет правительствин пĕлтерĕвĕнче каланисене тĕплĕн ответлени пулса тăрать. Пĕрлешÿллĕ нацисем, пуринчен ытла хăйсен пĕрлехи тăшманĕпе таткăлăн кĕрешнĕ тапхăрта, пĕр-пĕринпе пĕтĕмпех килĕштерсе ĕçлеччĕр тесе хĕрÿллĕн тăрăшса, Польша правительстви хальхи вăхăтра халăх умĕнче урăх тавлашмасан лайăхрах пулĕ тесе шутлать.

Пĕр енĕ çеç йышăннă решенисене е Польша республикин территорийĕнче пулнă е малашне пулма пултаракан фактсене Польша правительстви йышăнмасть пулин те, вăл икĕ енĕшĕн те килĕшÿллĕ те тĕрĕслĕхлĕ условисенче Совет Союзĕпе хăй чунтан-чĕререн килĕшесшĕн пулни çинчен пĕр хут çеç мар каласа панă. Çавна пурнăçлас тесе, Польша правительстви Британи правительствипе Америка правительствипе Польшăпа Совет Союзĕн правительствисене пĕр-пĕринпе каластарма ыйтать, çав калаçусене Англипе Америка правительствисем те хутшăнмалла, унта пур тĕп ыйтусем тăрăх та калаçмалла, çав ыйтусене татса пани вара Польшăпа Совет Союзне пĕр-пĕринпе туслăн çыхăнса ĕçлеме май памалла. Польша правительстви çакна Пĕрлешÿллĕ нацисем çĕнтерччĕр тата вăрçă хыççăн Европăра государствăсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса таччăр тесе тăвасшăн».

ТАСС пĕлтерни

Польша правительствин Лондонра январĕн 15-мĕшĕнче тунă заявленийĕ пирки ТАСС çапла калама полномочи илнĕ:

1. Совет Союзĕпе Польша хушшинчи чикĕ тĕлĕшпе Керзон линине йышăнас тĕп ыйту çинчен Польша правительствин заявленийĕнче нимĕн те каламан, çавăнпа та вăл Керзон линине йышăнмасть тесе шутламалла.

2. Польша правительстви хăйне Совет правительстви хушшинче официальнăй калаçусем пуçлама сĕнни çинчен Совет правительстви çапла шутлать: Польша правительстви халăха улталас шутпа çавăн пек сĕннĕ, мĕншĕн тесессĕн çакна ăнланма йывăр мар: Совет правительстви хăй дипломатиллĕ йĕркепе çыхăнма пăрахнă правительствăпа официально калаçма пултараймасть.

Совет руководителĕсем çакăн çинчен астутараççĕ: Польша правительствин хăйĕн айăпĕпе унпа дипломатиллĕ çыхăнма пăрахнă, «Катыньре вĕлерни» пирки нимĕç оккупанчĕсем Совет Союзне хирĕç пуçласа янă элекле кампание Польша правительстви активлăн хутшăннă пирки унпа çыхăнма пăрахнă.

Совет руководителĕсен шухăшĕпе, маларах кăтартнă обстоятельствăсем хальхи Польша правительстви Совет Союзĕпе лайăх кÿршĕ пек килĕштерсе пурăнма пуçлама шутламаннине тепĕр хут кăтартса парать.

Нимĕç захватчикĕсен Катыньри тискер ĕçĕсене тĕпчесе пĕлни çинчен пĕлтерни

Смоленск хулине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă май, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе пĕлме тунă Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тыткăна илнĕ поляк офицерĕсене Смоленск патĕнчи Катынь вăрманĕнче персе вĕлернине тĕпчесе пĕлмешкĕн хăйне уйрăм комисси тунăччĕ.

Çав комиссин председателĕ—академик Н. Н. Бурденко, членĕсем: академик А. Н. Толстой, митрополит Николай, генерал-лейтенант А. С. Гундоров, Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çурçийăх обществисен Союзĕн Исполком председателĕ С. А. Колесников, РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ академик В. П. Потемкин, Хĕрлĕ Çарăн Главнăй санитари управленийĕн начальникĕ генерал-полковник Е. И. Смирнов тата Смоленск облисполкомĕн Председателĕ Р. Е. Мельников.

Çав комисси хăйĕн ĕçне пĕтерет ĕнтĕ, хăй тĕпчесе пĕлнин результачĕсем çинчен вăл çитес вăхăтрах пичетлесе пĕлтерĕ. (ТАСС).

Çар çыннисен çемьисене куллен пулăшса тăрар

Январĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарта çар çыннисен çемьисене государство енчен пулăшу парас тата вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлеме ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнче тата ĕççынни депутачĕсен районсенчи тата хуласенчи Совечĕсен исполкомĕсем çумĕнче тунă отделсен заведующийĕсемпе старши инспекторĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕсем Чарыков тата Андреев юлташсем, ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ, ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ тата республикăри партипе совет организацийĕсемпе наркоматсен представителĕсем пулчĕç.

Канашлу пĕр ыйту—Хĕрлĕ Çар ретĕнчи çынсен çемьисене государство енчен пулăшу парас тĕлĕшпе 1943 çулта тунă ĕçсен итогĕсем тата малашнехи задачăсем çинчен ЧАССР Совнарком председателĕн çар çыннисен çемьисене государство енчен пулăшас енĕпе ĕçлекен заместителĕ Киреев юлташ тунă доклада сÿтсе-явнă.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Совет органĕсен, партин вырăнти организацийĕсен çар çыннисен çемьисене пулăшу парас ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» постановлени йышăннăранпа кăçалхи январĕн 21-мĕшĕнче çулталăк тулать. Партин Центральный Комитечĕн çак решенийĕ çар çыннисене пулăшас тата вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра та хăвăрт сирме пулăшрĕ, партипе совет вырăнти организацийĕсене Тăван çĕршыва сыхлакансен çемьисене государство енчен пулăшса тăрас тата вĕсене ĕçе вырнаçтарса пурнăç условине лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă улшăнусем тума пулăшрĕ.

Государство çар çыннисен çемьисене пенси, пособи пама çулсеренех нумай миллион тенкĕ укçа уйăрать, тĕрлĕрен льготăсем парать. 1943 çулта кăна Чăваш республикинче çар çыннисен çемьисене 55 миллион та 806 пин тенкĕ пособи, вăрçă вилнĕ тата сухалнă çынсен çемьисене 10 миллион та 173 пин тенкĕ пенси панă, ялхуçалăх налогĕсем тÿлессинчен 58 миллион та 816 пин тенкĕ—льгота панă.

Государство пулăшăвне парас, çар çыннисен çемьисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас енĕпе ĕçлекен отделсем, çар çыннисен çемьисене шута илес ĕçе йĕркене кĕртрĕç, пособисемпе пенси тата льготăсем парас ĕçе тĕрĕслесе тухрĕç. Ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе пыраççĕ. Çакăнпа пĕрлех отделсем çар çыннисен çемйисен ĕçлеме пултаракан членĕсене ĕçе вырнаçтараççĕ, килçуртпа юсама пулăшаççĕ, вăхăтлăха нушана кĕрсе ÿкнĕ çемьене вăхăтра вутă, апат-çимĕç, кĕпе-тумтир парса пулăшаççĕ, фронтовиксен ачисене яслисемпе площадкăсене вырнаçтараççĕ.

Киреев юлташ çар çыннисен çемьисене куллен пур енлĕн пулăшас тĕлĕшпе ĕçе лайăх организацилене отделсене палăртрĕ, çав хушнăрах уйрăм районсенче çар çыннисен пурнăç ыйтăвĕсем çине кирек-сĕр пăхакан руководительсене критиклерĕ.

Киреев юлташăн докладĕ хыççăн канашлура активлă прени пуçланчĕ. Мĕнпурĕ 17 çын тухса каларĕç. Гособеспечени отделĕсен заведующийĕсем Пылаева (Улатăр хули), Дремова (Канаш хули), Тимофеев (Вăрмар районĕ), Гринев (Шупашкар районĕ), Воинова (Сĕнтĕрвăрри районĕ), Ласточкина (Комсомольски район), Пушкина (Шупашкар хули), Игнатьев (Калинин районĕ), Бычкова (Сĕнтĕр районĕ) тата ытти юлташсем.

— Отдел ĕçлеме пуçличчен пирĕн районри колхозсен хăшпĕр руководителĕсем фронтовиксен çемьисен ыйтăвĕсем çине киревсĕр пăхнă тĕслĕхсем пулнă. Отдел организацилене хыççăн эпир чи малтан фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлеме колхозсенче актив пухрăмăр. Çак актив çине таянса ĕçлени пире ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме, çар çыннисен çемьисен пурнăç ыйтăвĕсене тĕплĕн тĕпчесе пĕлме май пачĕ,—тет Гособеспеченин Комсомольски районри отделĕн заведующийĕ Ласточкина юлташ. — Пирĕн отдел çар çыннисен çемьисене пĕрмаях лайăх пурăнмалли условисем туса парассишĕн тăрăшать. Эпир çапла тăвасшăн: çар çыннисен çемьисем пурин те килĕсенче вылăх-чĕрлĕх тытчăр, пахча-çимĕç лартса тума кил вырăнĕ пултăр. Çакăншăн тăрăшатпăр эпир.

Çавăн пекех эпир кăçал кĕркунне çар çыннисен çемьисене хĕле хатĕрленсе кĕме тĕплĕн пулăшрăмăр. Кашни çемьенех вутă турттарса парăмăр. Отдел фронтовиксен ачисене шкула çÿреме условисем туса парассишĕн те тăрăшрĕ.

Прение ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева тата ВКП(б) Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Чарыков юлташсем сăмахсем тухса каларĕç.

— Совет Союзĕнче фронтовиксен çемьисен пурнăç ыйтăвĕсем çине чунсăррăн пăхни пачах пулмалла мар. Гособеспечени отделĕсем çар çыннисен çемьисен ыйтăвĕсем çине чунсăррăн пăхакан уйрăм çынсемпе руководительсене çийĕнчех тăрă шыв çине кăларса хаяррăн айăпламалла тăвас пулать,—терĕ Андреева юлташ.

Чарыков юлташ Гособеспеченин отделĕсем хăйсен чыслă обязанносĕсене тимлĕнрех те тĕплĕнрех туса пыма тытăннине палăртрĕ. Гособеспечени работникĕсем фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçе пуçаруллăнрах туса пыма тытăннă, ку ĕçре опыт пухнă.

— Анчах çар çыннисен çемьисене пулăшас, вĕсен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе пирĕн çитменлĕхсем те пур-ха,—тет Чарыков юлташ.—Гособеспечени отделĕсен заведующийĕсене пысăк правăсем панă. Вĕсем райсовет исполкомĕсенче председателĕн заместителĕн правипе усă кураççĕ. Отделсен заведующийĕсем çакна шута илсе, хăйсен ĕçне тата тимлĕрех туса пымалла, çар çыннисен çемьисене куллен тата пур енлĕн пулăшса тăрассишĕн большевикла ĕçлемелле.

Хĕрлĕ Çар генералĕсене, офицерсен, сержантсен тата рядовойсен составне Совет Союз Геройĕн ятне пани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçу фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çав ĕçре хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх, генералсен, офицерсен, сержантсен тата рядовойсен пысăк ушкăнне, Ленин орденĕпе тата «Ылтăн Çăлтăр» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Совет Союз Геройĕн ятне мĕн пурĕ 160 çынна панă. (ТАСС).

Çур çулхи плана январь уйăхĕнче тултарассишĕн

ВАРНАР, январĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Уравăшри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз членĕсем чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли 1944-мĕш çур çулхи плана январь уйăхĕнче пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн тăрăшаççĕ. Çавăнпа вĕсен ĕç тухăçлăхĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать. А. Уваров, А. Афанасьева, Е. Степанова, Н. Егоров колхозниксем кунсерен 2,5-шер кубометр вутă касса хатĕрлес вырăнне 3—4-шер кубометр хатĕрлеççĕ. Ф. Ковров, М. Орлова, Ф. Митрофанов колхозниксем вутă турттарнă çĕрте кулленхи нормăна 200-шер процент тултараççĕ.

Н. ВОЛКОВ.

Судоверфь коллективĕн обязательствисем

СЕНТЕРВАРРИ. Судоверфь коллективĕ кăçал плана иртнĕ çулхинчен ытларах тултарас майпа, социализмлă ămăртăва хутшăнса çĕнĕ обязательствăсем илнĕ. 1944 çулăн 1-мĕш кварталĕнчи заданине срокчен пурнăçлама, çав вăхăтрах топливона 10 процент, çуртйĕр материалĕсене 5 процент перекетлеме пулчĕ. Сталинградри порта юсама 500 кубометр çуртйĕр материалĕсем ярса пама обязательство илчĕ.

(Хамăр информ.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен районри пухăвĕ

СЕНТЕР, январĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Январĕн 16-мĕшĕнче кунта коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе çитес çуракине хатĕрленесси çинчен сÿтсе яврĕ. Çак ыйтупа пуху райсовет исполкомĕн председателĕн И. Свешников юлташ докладне итлерĕ.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче районри колхозсем паллă çитĕнÿсем турĕ. Тырпула уйхиртен пухса кĕртес ĕçе 1942 çулхинчен 10 кун маларах вĕçленĕ. Октябрь уйăхĕнче аван çапса пĕтернĕ. Район государствăна памалли плана срокчен чылай малтан тултарнă. Аванс шучĕпе государствăна 1944 çулшăн 10.000 пăт тырă панă. Кунсăр пуçне, колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем перекетленĕ тырра 128.200 пăт государствăна сутнă.

Тырпулсене пухса кĕртес, кĕрхи тырăсене акас тата государство умĕнчи парăмсене парса татас тĕлĕшпе Кăвасри «КИМ», Ландăшри «Красная Чувашия», Кадикассинчи «Колос», Кашмашри «Свобода», Пушкăртри «Новый путь» тата Атапай ялсоветĕнчи колхозсем лайăх ĕçленĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсем, сăмахран, «Гигант», «Малалла», «Ядро», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем çителĕксĕр ĕçленĕ.

Пухура районри хатĕрлев контрисем сÿрĕккĕн ĕçлесе пынине хытă критиклерĕç. Район иртнĕ çулта государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм, сÿс-кантăр, пахча-çимĕç памалли плансене тултарса çитереймен.

Район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăçлăн пурнăçланă. Анчах чылай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерес тĕлĕшпе начар ĕçленĕ. Планпа кашни сумалли ĕнерен 1.100 литр сĕт суса илес вырăнне, 864 литр çеç илнĕ. Çамрăк выльăхсене пăхса ÿстерес ĕçре те çитменлĕхсем пур. Сăмахран, 1943 çулта çуралнă пăрусенчен 16,3 проценчĕ, сысна çурисенчен 16,6 проценчĕ вилнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе «Сталь», «Искра», «Аврора» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсем питех те начар ĕçлеççĕ.

Доклад тăрăх прение 15 çын тухса каларĕç. «Колос» колхоз председателĕ коммунист К. Тямин юлташ çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен каласа пачĕ.

— Эпир,—тет вăл,—мĕнпур хуçалăх ĕçĕсене партиллĕ-политикăллă тата агитациллĕ-массăллă ĕçсемпе таччăн çыхăнтарса тăватпăр. Фронтри чаплă çĕнтерÿсем çинчен, çĕршыва патриотла çĕкленÿ çинчен тăтăшах ăнлантарса пани колхозниксене хавасланса ĕçлеме пулăшать. Çапла ĕнтĕ кăçал колхоз çуракине часах хатĕрленсе çитрĕ. Халĕ колхозниксем агротехникăна вĕренеççĕ.

Пуху вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе «Идея», «Авангард», «Малалла», «Краснофлотец», «Наука» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем уйрăмăнах начар ĕçленине палăртрĕ.

Тухса калакансем МТС тата райçĕрĕç пайĕн ĕçĕсене хытă критиклерĕç. Райçĕрĕç пайĕ хальхи вăхăтра агротехникăллă ĕçсене, тырпулсене тĕрĕс ылмаштарса акма хатĕрленес ĕçе сÿрĕккĕн ертсе пырать. МТС-ра кадрсем хатĕрлесси çителĕксĕр пырать.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн представителĕ С. Сютрюков юлташ колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатма кирли çинчен каларĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Я. Петров юлташ парти ретне илес, çамрăк коммунистсене пăхса ÿстерес, пĕччен коммунистсемпе ĕçлес ыйтусем çинчен чарăнса тăчĕ.

Сÿтсе-явнă ыйтусем тăрăх пуху тивĕçлĕ решени йышăнчĕ. Çав решенире малашнехи вăхăтра тумалли хуçалăхла тата партиллĕ ĕçсене палăртса хăварчĕ.

Т. ИВАНОВ,
М. КАРПОВ.

Парторганизаци çуракине хатĕрленес ĕçре

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Атнашри парторганизаци хăйĕн йышĕпе ытлашши пысăках та мар. Унта пурĕ 7 коммунист тăрать. Вĕсенчен тăваттăшĕ иртнĕ çулта çеç парти ретне кĕнĕ. Çамрăк коммунистсене ответлăрах ĕçсене вырнаçтарса, практикăллă ĕçре пиçĕхтерсе, вĕрентсе пыраççĕ.

Коммунистсем пурте ĕçре: В. Степанова—Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, Сорокин—уйхир ĕçĕн бригадирĕ, Иванов—старши конюх, Сюмкин—пушарпа кĕрешекен дружина начальникĕ, Антонов—колхоз счетовочĕ, Куракин—ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Коммунистсем пур ĕçе те активлăн туса пыраççĕ, çакăнпа пĕрлех вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене хастарлăн ĕçлеме мобилизацилеççĕ. Иртнĕ çулта Киров ячĕпе тăракан колхозри коммунист Куракин ертсе пыракан 7-мĕш бригада гектартан 17-шер центнер урпа туса илнĕ.

Кăçалхи çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитессишĕн парторганизаци çине тăрса ĕçлет. Çуракине хатĕрленес ыйтăва парти пухăвĕнче сÿтсе-явнă. Йышăннă решение уйрăм коммунистсем, çавăн пекех колхозниксемпе бригадирсем мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесех тăраççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем тунă ĕнтĕ. Акма кирлĕ вăрлăхсене пурне те сортласа, хатĕрлесе хунă, тивĕçлĕ кондицие лартнă. Колхозри 70 çула çитнĕ ватă шорник Ф. Рязанов 10 хăмăт тата ытти хатĕрсем юсанă. Колхоз уя 1500 тонна тислĕк кăларнă, 10 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ, плугсемпе сÿрĕсене пĕтĕмпех юсаса çитернĕ.

Уя тислĕк кăларас тата вырăнти удобренисем пухас тĕлĕшпе комсомолка М. Каховская ертсе пыракан бригада уйрăмах лайăх ĕçлет. Вăл бригада кăçал хĕле кĕнĕренпе уя 900 лав ытла тислĕк кăларнă. Старши конюх коммунист Иванов лашасене çураки валли лайăх хатĕрлесе çитерессишĕн тăрăшса ĕçлет. Ака тунă чухне лашасене çитерме 120 центнер сĕлĕ, утă тата ытти апатсем хатĕрлесе хунă, вĕсене конюхсен аллине актпа çирĕплетсе панă.

Парти организацийĕ ертсе пынипе, Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз кăçал гектартан 100-шер пăт тĕштырă туса илессишĕн кĕрешĕве сарсах пырать.

Ст. АСЛАН.

Донбассри ачасене тăванла пулăшар

ÇĔРПУ, январĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра Донбасс ачисене тăванла пулăшма укçа-тенкĕ пухасси анлăн сарăлса пырать. Кĕске вăхăтрах 27.000 тенкĕ пухса Госбанкăн районри отделенине хывнă. Сталинăри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем пĕр кун хушшинче 3.325 тенкĕ, «1905 год революцийĕ» колхозри комсомолецсем 1.800 тенкĕ пухнă. Çак колхозри Торофеева тата Хомякова комсомолкăсем 200-шер тенкĕ панă. Комсомолăн «Новая жизнь» колхозри пуçламĕш организацийĕнче (секретарĕ Тимакина юлташ) 13 комсомолец. Вĕсем пурте 100-шер тенкĕрен кая мар панă. Çавăн пекех фельдшер шкулĕнче вĕренекенсем 10.000 тенкĕ, Туçири туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 1000 тенкĕ пухнă. Укçа пухасси малалла пырать.

П. МИТРОФАНОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Фронт валли пахча-çимĕçпе çĕрулми типĕтсе парар

Хĕрлĕ Çар валли пахча-çимĕçпе çĕрулми типĕтсе хатĕрлени тата вĕсене кăтартнă вырăна вăхăтра çитерни пысăк вырăн йышăнса тăни паллă.

Пахча-çимĕçсемпе çĕрулмие типĕтмесĕр фронта çитерме йывăр, хăш чухне (уйрăмăнах сивĕ вăхăтра) ăна пачах та тума май çук.

Типĕтнĕ пахча-çимĕç тата çĕрулми чĕрринчен 7—10 хут çăмăлланать, сивĕре пăсăлмасть тата вĕсенчен апат-çимĕç хатĕрлеме те çăмăлрах. Çаксем вара фронтшăн ытла та паха тĕслĕхсем пулса тăраççĕ.

Пирĕн республикăри пахча-çимĕçпе çĕрулми типĕтекен нумай предприятисем аван ĕçлеççĕ. Республика 1943 çулти плана 122,6 процент пурнăçларĕ. Куславккапа Вăрнарти пахча-çимĕç типĕтекен предприятисем çулталăк планне ытлашшипех пурнăçларĕç. Улатăрти, Кĕтеснерти, Канашри, Етĕрнери, Сосновкăри предприятисем те графика йĕркеллĕ пурнăçласа пыраççĕ.

Анчах республикăра япăх ĕçлекен предприятисем те пур-ха. Ку ĕç Хĕрлĕ Чутайра тата Пăрачкавра çителĕксĕр пырать.

Çак районсенче çĕрулмипе пахча-çимĕç типĕтес ĕç япăх пыны чăн малтанах ку ĕçе йĕркелеме пĕлменнинчен килет. Кунта ĕç вутă çитсе лĕксĕр пулнипе тата хатĕрленĕ продукцие турттарса тухма лавсем çукки пе чарăнса тăрать.

Хĕрлĕ Чутай тата Пăрачкав райисполкомĕсем пахча-çимĕç тата çĕрулми типĕтекен предприятисене пур енчен те пулăшса пымалла; вăхăтра чĕртавар тăратмалла тата хатĕрленĕ продукцие турттарса тухнине асăрхаса тăмалла.

Фронта типĕтнĕ çĕрулмипе пахча-çимĕç ытлăн-çитлĕн парса тăрса, тăшмана хăвăртрах çĕнтерме Хĕрлĕ Çара пулăшар.

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНЕР

Агротехникăна яланах пурнăçласа пырассишĕн

— Агротехника кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа пыни вăйлă тырпул туса илме май парать. Хĕлле тумалли агротехника ĕçĕсене пурнăçа кĕртсе пырсан, çуркунне вăйлă тырпул илме никĕс хывса хăваратпăр, —тет Шăхасан районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз председателĕ С. Афанасьев юлташ.

Ку колхоз çулсеренех агротехника кăтартăвĕсене лайăх пурнăçласа пынипе пысăк тухăçлă тырпул туса илет. Колхоз 215 гектар çинче юр тытса хăварчĕ. Уя 2.500 лав тислĕк кăларнă. 60 центнер кĕл, 36 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 87 центнер фекали пухса хатĕрленĕ. Вăрлăхсене кирлĕ чухлĕ уйăрса хунă, вĕсене пĕтĕмĕшпех сортласа тасатнă. Колхозниксене агротехникăна вĕрентес тĕлĕшпе агрокружок организацилерĕç.

Агротехника кăтартăвĕсене Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Ухманти «Победа», «Ямурза», Тăрăнти «Красный партизан» колхозсенче те аван пурнăçласа пыраççĕ. Анчах та çак ĕçе Ленин ячĕпе тăракан колхозра тивĕçлипе хакламаççĕ. Колхозниксем улăм кĕлĕсене çырмасене, урама тухса тăкаççĕ. Çав вăхăтрах колхозра пĕр центнер та вырăнти удобренисем пухса хатĕрлемен, уйра пĕр гектар çинче те юр тытса хăварман, колхозниксене агротехникăна вĕрентессине йĕркелемен. Ялсовет исполкомĕ колхозсем вырăнти удобренисене мĕнле хатĕрленнипе пачах интересленмест. Ялсовет исполкомĕн председателĕ А. Иванов колхозсемпе ĕçлессине хăйĕн тивĕçĕ пулса тăнине ăнланса илмен, колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен паянхи куна çитсе те ялсовет исполкомĕн ларăвĕсенче сÿтсе-явман.

Вырăнти удобренисене хатĕрлесе уя кăлармалли уйăхлăха тивĕçлипе ирттересси пысăк та ответлă задача пулса тăрать. Çавăнпа та ку ĕçе пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене явăçтармалла, ялсоветчĕ вĕсене тивĕçлипе ертсе пымалла.

В. ВЕСЕЛОВ.

СŸРĔК ĔÇЛЕÇÇĔ

УЛАТАР. (Телефонпа). Районри колхозсем вырăнти удобренисем хатĕрлес енĕпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Уя тислĕк кăлармалли плана январĕн 15-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 30 процент ытларах çеç тултарнă.

Калинин ячĕпе тăракан колхозăн уя 5.000 лав тислĕк кăлармалла, халь пурĕ те 100 лава яхăн çеç кăларнă. «Победа» колхоз 7.000 лав вырăнне 300 лав, «Прогресс» колхоз 9.000 лав вырăнне 250 лав кăна кăларнă.

Районра тислĕк кăларас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен колхозсем те пур. Сăмахран, «Красный Барнаул» тата «Красная Мордовия» колхозсем кашниех хире 1.200-шер лав ытла тислĕк турттарчĕç.

«Красная Мордовия» колхозра тислĕке уя турттарас тĕлĕшпе конюх Александр Персняков тата Дудина юлташсем аван ĕçлеççĕ, вĕсем тислĕке турттарас ĕçре вăкăрсемпе те усă кураççĕ.

Вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттарас енĕпе сÿрĕк ĕçлекен колхозсен малта пыракан колхозсен примерĕпе ĕçлемелле.

А. КОПЫЛОВА.

КĂÇАЛ ТА ĂМĂРТСА ĔÇЛЕТПĔР

Елчĕк районĕнчи Лаш-Таябари Крупская ячĕпе тăракан колхоз пĕлтĕр вăйлă тырпул туса илессишĕн тата выльăх-чĕрлĕх йышне, унăн тухăçлăхне ÿстерессишĕн Вăрăм Хăвари «Хунав» колхозпа ăмăртса ĕçлерĕ.

Агротехникăна ăнăçлăн пурнăçласа пырса тата ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те вăхăтра туса пырса, колхоз пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене парса татнă хыççăн 1944 çулшăн 120 центнер тĕштырă, 43 центнер аш-какай тата 950 литр сĕт пачĕ. Государствăна кооперации урлă 11.000 пăт тĕштырă сутрĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне 2 килограмм çуршар тырă валеçеççĕ.

Крупская ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та пур выльăхсем енĕпе те ытлашшипех тултарчĕ.

Крупская колхоз членĕсем вăйлă тырпул туса илессишĕн кăçал та ăмăртса ĕçлеççĕ, çуракине хатĕрленеççĕ. Январĕн 5-мĕшĕ тĕлне 80 гектар çинче юр тытнă, 4.600 лав тислĕк кăларнă, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕсене пухаççĕ. Ялхуçалăх машинисенчен 28 плуг, 3 культиватор юсаса хунă. Вăрлăха çак кунсенчех сортласа пĕтереççĕ. Кăçал гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн ăмăртса ĕçлетпĕр, — теççĕ колхозниксем.

И. ПЕТРОВ.

Ют çĕршывсенче

Чехословаки хаçачĕ—поляксен реакциллĕ çыннисем Хĕрлĕ Çарăн наступленийĕ пирки мĕн калани çинчен

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакин «Нове Чехословенско» ятлă хаçачĕ январĕн 15-мĕшĕнче хăйĕн умстатьинче çапла çырнă:

«Миколайчик — Сосновский правительстви — Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе пынипе савăнман пĕртен-пĕр союзник пулса тăрать. Январĕн 6-мĕшĕнче Польша правительстви заявлени пичетлесе кăларнă. Тепĕр кунне Миколайчик радиопа тухса каланă. Çав заявленисенчен çак курăнать: Польша правительстви союзниксене хăйсен мĕнпур ĕçĕсене пăрахтарса, поляк панĕсен çĕр ыйтăвĕсене пăхса тухтарасшăн пулнă. Польша руководителĕсен шухăшĕпе, Польшăпа Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе дипломатиллĕ çыхăниччен тата пĕр-пĕрин патне посолсем ярииччен поляк халăхĕ Хĕрлĕ Çара хăйне ирĕке кăларакан союзлă çар тесе шутламалла мар пулать, унпа çыхăнса ĕçлемелле мар пулать. Сосновский Польшăра хăй майлă ĕçлекен çынсене алла хĕçпăшал тытса нимĕçсемпе кĕрешекен поляк патриочĕсене вĕлерсе пĕтерме хушнă. Çавăн пек хушнине халиччен те пăрахăçа кăларман-ха. Кунтан та начартарах ĕçсем тăвакан правительство пулма та пултараймасть пуль. Вăл хăй тăвас тенине тума пултарсассăн, çапла пулса тăнă пулĕччĕ: союзниксем чикĕсем пирки тавлашма тытăннă пулĕччĕç, çакă вăл нимĕçсемшĕн усăллă çеç пулнă пулĕччĕ. Поляк халăхĕ Хĕрлĕ Çар ение çурăмĕпе çавăрăнса тăнă пулĕччĕ. Поляк партизанĕсем тата Миколайчик—Сосновский майлă ĕçлекен çынсем хушшинче граждан вăрçи пуçланса кайнă пулĕччĕ. Нимĕçсем йывăр лару-тăруран тухма çакăнтан лайăхрах мел ĕмĕтленес те çук».

Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи чикĕсен ыйтăвĕсене татса панă çĕрте Совет правительствин заявленийĕ тĕп вырăн йышăнмаллине палăртса, хаçат çапла çырать:

«Миколайчик çав ыйту тавра Совет Союзне хирĕçле хăтланни путланса ларĕ. Польша правительстви çав çулпа каяс пулсан, вăл тата ытларах пăтрашăнса кайĕ. Çапла вара вăл хăйĕн çĕршывĕнче те путланса ларĕ, мĕншĕн тесессĕн поляк халăхĕ ăна пăхăнмĕ. Помещиксемпе пилсудчиксем хăйсен Хĕвеланăç Украинăри çĕрĕсене каялла туртса илме пулнине пурнăçа кĕртесшĕн пулса, нимĕçсене Польшăран хăваласа кăларма тата Польшăна ирĕклĕ государство туса хума пултаракан пĕртен-пĕр çара поляк халăхĕ ан шуйлăштăр тесе тăрăшни ухмахла хăтланни пулать. Поляк халăхне тăвана тăван вĕлермелли вăрçа сĕтĕрсе кĕртни Михайлович политикине тепĕр хут пурнăça кĕртни пулать».

Польша умĕнче çĕнĕ лайăх пурнăç тăвас çул, Совет Союзĕпе тата Чехословакипе союз туса туслăн пурăнакан демократиллĕ вăйлă государство тăвас çул уçăлнине кăтартса парса, хаçат малалла çапла çырать: «Анчах Лондонри Польша правительстви çакăншăн мар тăрăшать. Вăл йышăннă çул—Совет Союзне Пилсудский пек тапăнас çул патне, ют çĕрсене тытса илес политика патне, Береза Тартусскаяри концлагерьсем патне, рабочисемпе хресченсен юхăмне вăйпа пусарасси патне, Бек пурнăçласа пынă политика патне, Мюнхенра нимĕçсемпе килĕштерсе ĕçлес тата Чехословакие хирĕç нимĕçсемпе пĕрле хĕçпăшалпа тапăнас политика патне илсе пырать. Çак çул вăл Совет Союзне хирĕç кордонсем тăвас политика патне илсе пырать. Польша та, Европа та çав çулпа каяс çук. Лондонри поляк панĕсен çулĕ союзлă халăхсен çулĕнчен пăрăнса каять».

США-ри поляксен прогрессивнăй деятелĕсем калани

НЫС-ЙОРК, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитермен). «Польшăн Американри тусĕсен» обществин руководителĕ социалист Пенжик кĕнеке пичетлесе кăларнă, çав кĕнекере вăл Лондонри поляк социалисчĕсен тата поляк хресченĕсен организацийĕсене Совет Союзĕнчи поляк патриочĕсен союзĕпе тата Пĕрлешÿллĕ Штатсенчипе ытти çĕршывсенчи поляксен демократиллĕ организацийĕсемпе пĕрле Польшăна ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕ тума сĕнет, çав комитет Польшăн вăхăтлăх правительстви пулса тăрĕ, тет. Çав комитетăн Совет Союзĕпе халех çыхăнмалла, Совет Союзĕпе Чехословаки тунă договор çумне хутшăнмалла, Çывăхри хĕвелтухăçĕнче Польша çарне Сосковский, Кукель, Андрес генералсенчен тата «мĕнпур ытти фашистла элементсенчен» тасатмалла, ăна вара совет фронтне, Хĕрлĕ Çар поляк дивизийĕсемпе пĕрле пирĕн пĕрлехи тăшмана хирĕç кĕрешекен фронта ямалла. Польша территорине тасатсан, Хĕрлĕ Çар, поляк çарĕ тата наци комитечĕ Польшăра йĕрке туса хурсан, наци комитечĕ суйламалли демократиллĕ çĕнĕ закон кăларĕ. Çав закон поляксене парламент суйлама май парĕ. Парламент тытăм йĕркине туса хурĕ. Вара наци комитечĕ хăйĕн мĕнпур полномочийĕсемпе функцийĕсене çĕнĕ правительство аллине парĕ.

Лондонри поляк социалисчĕсен организацийĕсемпе хресченсен организацийĕсем Совет Союзĕнчи поляк патриочĕсен союзĕпе тата ытти çĕршывсенчи поляк демократĕсемпе пĕрлешмесен, Польшăн хальхи правительствинчи реакционерсене хÿтĕлеме пăрахмасан,—Польшăра фашизм пулатех, тесе асăрхаттарать Пенжик. Польшăн хальхи правительстви вăл законлă правительство мар, мĕншĕн тесен вăл 1935 çулхи конституци тăрăх йĕркеленнĕ; çав конституцие сенат та сейм та ратификацилемен. Çав правительство вăл поляк халăхĕн правительстви пулса тămасть. Унăн политики вăрçăччен Польша правительствин политики пек, уйрăмах та вăл Совет Союзĕ тĕлĕшпе йышăннă политика пирки çавăн пек пулса тăрать.

Лондонри поляк социалисчĕсем—Польша правительстви халăх ирĕкне палăртса тăрать, тесе каланă. Çав декларацие Пенжик сирсе ярать. Пенжик шухăшĕпе, Лондонри тата Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи поляк социалисчĕсем пĕр-пĕринчен уйăрălса кайнин сăлтавĕ çавăнта ĕнтĕ. Польша правительствине кĕрекен социалистсен унтан тухма тата хăйсен йăнăшне тÿрлетме вăхăт пур-ха, тет вăл.

ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне Пенжик çапла каланă: çак кĕнекене США-ри поляксен прогрессивнăй деятелĕсен ушкăнĕ темиçе хут та сÿтсе-явнă. Совет Союзĕпе Польша хушшинчи çыхăнусем çинчен Совет правительстви каланине Пенжик çапла хак панă: вăл Польшăпа Совет Союзĕ хушшинче туслă çыхăну тумалли тата вăйлă та иккама пăхăнман Польша туса хумалли чăн-чăн çирĕп никĕс пулса тăрать, тенĕ.

ИСПАНИРЕН АНГЛИЕ ПЫНĂ ПАРОХОД ÇИНЧЕ БОМБĂСЕМ ТУПНĂ

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Испанирен Англие пароходпа илсе пынă апельсинсен ещĕкĕсенче нумай вăхăт иртсен тин çуралакан бомбăсем тупнă. Агентствăн дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла калать: хальхи вăхăтра çав ĕçе тĕпчеççĕ, Англи правительстви дипломати тĕлĕшпе мĕн тăвасси вара çав тĕпченин результачĕсенчен килĕ, тет.

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Манчестер гардиен» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Апельсин ещĕкĕсенче нумай вăхăт иртсен тин çуралакан бомбăсем тупни Англи халăхне кÿрентерет, Англи правительстви Франко генералпа унăн правительстви пирки кăмăлсăр пулни çинчен уççăнтарах каласа парĕ. Çак ĕç вăл тăшман агенчĕсем—фалангистсем (Испанири фашистсем) е нимĕçсем тунă ĕçсем пулса тăраççĕ. Франко генерал тĕнĕл держависем тĕлĕшпе çавăн пек туслă «нейтралитет» тытса пынине урăх чăтса тăма çукки çинчен ăна каласа пама вăхăт ĕнтĕ».

ЮГОСЛАВИРИ ХАЛĂХА ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН ÇАРĂН ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен килнĕ хыпарсем тăрăх, вăтам Боснире тата Банья—Лукапа Приедор секторĕнче Гитлер çарĕсем малтанхи пекех наступлени туса пыраççĕ. Мрконич — Град—Яйце—Бугойно секторĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ, кунта тăшман уйрăмах хытă хĕсет. Гитлеровецсем Банья—Лука патĕнчи фронта Славонирен тата тепĕр дивизи илсе пынă. Унта халĕ шартлама сивĕсем тăраççĕ, анчах та çапăçусем кăнтăрла та, çĕрле те чарăнмаççĕ. Икĕ енĕ те чылай пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Нимĕçсен икĕ бомбардировщикне персе ÿкернĕ тата пилĕк танкне çĕмĕрнĕ.

Хĕвелтухăç Боснире Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн пĕр чаçĕ Тузлы хули çывăхĕнче 200 усташана çавăрса илнĕ те нумайĕшне пĕтерсе тăкнă. Хĕçпăшал, боеприпас тата тумтир нумай тытса илнĕ. Вареш çывăхĕнче эсэсовецсен дивизийĕн пĕр полкĕпе пулса иртнĕ çапăçура 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, 30 гитлеровеца тыткăна илнĕ. 2 тупă, 9 станковăй пулемет, боеприпассем нумай тата полкăн пĕтĕм обозне тытса илнĕ.

УРУГВАЙ СОВЕТ СОЮЗНЕ ЯМА ПОСЛАННИК УЙĂРСА ЛАРТНĂ

НЫС-ЙОРК, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Монтевидеоран пĕлтернĕ тăрăх, Уругвай президенчĕ Амесага Совет Союзĕнче посланник пулса ĕçлеме Фругоние уйăрса лартнă.

ЕВРОПАРИ КОНСУЛЬТАЦИ КОМИССИЙĔН ЛАРĂВĔ

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра Европăри консультаци комиссийĕн пĕрремĕш официальнăй ларăвĕ пулса иртнĕ. Çав комиссие ăна, виçĕ министрăн Мускаври конференцийĕ йышăннă тăрăх, Европăра вăрçă вăхăтĕнче тухса тăнă ыйтусене тĕпчесе пĕлмешкĕн тунă. Ларура США представителĕ Ваинант председатель пулнă.

ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ ÇĔНĔ ВЫРĂНТА ХĂЙĔН ĔÇĔСЕНЕ ТУМА ПУÇЛАНĂ

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй штабĕ çакăн пек официальнăй пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: «Эйзенхауэр генерал Пĕрлешÿллĕ Королевствăра хăйĕн ĕçĕсене тума пуçланă, çав ĕçсене ăна пĕрлешÿллĕ штабсен начальникĕсем хушнă. Вăтаçĕр тинĕсрен Пĕрлешÿллĕ Королевствăна кайнă чухне вăл Рузвельт президентпа тата Черчилль премьер-министрпа канашланнă».

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

Стимсон калани.—Па-де-Кале районĕнчи объектсене çĕнĕрен атакăлама пуçлани, — Англи бомбардировщикĕсем Брауншвейга, Магдебурга тата Берлина тапăнни

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, США-н çар министрĕ Стимсон çапла каланă: январĕн 13-мĕшĕнче нимĕçсен авиаци завочĕсемпе сборочнăй завочĕсене тапăнма союзниксен 1.200 самолечĕ ытла вĕçсе кайнă.

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 14-мĕшĕнче союзниксен бомбардировочнăй тата истребительнăй самолечĕсем каллех Па-де-Кале районĕнчи объектсене атакăланă.

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем Германин авиаципе машинăсем тăвакан промышленность центрне — Брауншвейг хулине питĕ вăйлăн тапăннă. 2.000 тоннăна яхăн бомба пăрахнă. Хулара вăйлă пушарсем тухнă.

«Москито» йышши самолетсем Магдебургпа Берлина тапăннă. Авиацин ытти соединенийĕсем тăшманăн Çурçĕр Францири объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата тăшман шывĕсене минăсем пăрахнă. Çак мĕнпур операцисенчен 38 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Çыранри авиаци ĕнер Норвеги çыранĕсем патĕнче тăшман судниксене атакăланă. Тăшманăн таварсем турттарса çÿрекен икĕ вăтам пăрахутне торпедăсем пырса тивнĕ. Çавăн пекех тата çав пăрахутсене хÿтĕлесе пыракан темиçе карапа сиенленĕ.

Германи самолечĕсем январĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Лондон районне вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă. Ишĕлÿсем пулнă. Вилнисемпе аманнисем пур.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн составне кĕрекен Французсен чаçĕсем çаплах малалла куçса пыраççĕ. Виçĕ çÿллĕ вырăн тата Акуафондата ятлă яла тытса илнĕ. Тăшман контратакисене пурне те сирсе янă. Акăлчансен артиллерийĕ пĕтĕм фронт тăршшĕпех активлăн кĕрешнĕ.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, нимĕçсен Мостарти аэродромне (Югославия) вăйлăн тапăннă. Ангарсем тата вĕçсе улăхмалли çулсем çине фугаслă пысăк бомбăсем нумай пăрахнă. Пушарсем нумай тухнă тата взрывсем нумай пулнă. Авиацин ытти соединенийĕсем тăшманăн Шибеник районĕнче (Югославия) тăракан суднăсем çине бомбăсем пăрахнă. Темиçе суднăна вут хыпса илнĕ.

Италире союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Ответлă редакторшăн
П. Т. ЗОЛОТОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00318 Типография №1. Управление полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л, Тираж 14.400 экз